Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

30 (7884) № ✻ Шăмат кун, 2011 çулхи апрель (ака) уйăхĕн 23-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Президент лайăх енчен палăртрĕ

Ĕçлĕ визитпа

***Апрелĕн 20-мĕшĕнче республика Президенчĕ Михаил Игнатьев ĕçлĕ визитпа пирĕн районта пулчĕ. Юн кун вăл Катькасри пĕтĕмĕшле çемье практикин врачĕн уйрăмне, Мăн Сĕнтĕрти «Муркашри 2-мĕш номерлĕ район больници» муниципаллă сывату учрежденийĕн поликлиникине, «Моргауши-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн Лантăшри пекарнине, «Оринино» хуçалăхăн машинăпа трактор паркне çитсе курчĕ. Унта çавăн пекех ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ, республика ял хуçалăх министрĕ С. Павлов, ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ В. Муллина, район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов, район пуçлăхĕ И. Николаев, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, «Муркаш районĕн тĕп больници» муниципаллă сывату учрежденийĕн тĕп врачĕ В. Данилов хутшăнчĕç.***



Катькасри пĕтĕмĕшле çемье практикин врачĕн уйрăмĕнче пулнă май кунти ĕç-хĕлпе унăн врачĕ Елена Воронина паллаштарчĕ. Ку уйрăма ялти врач амбулаторийĕнчен 2009 çулта йĕркеленĕ. Территорири ял çыннисене квалификациллĕ медицина пулăшăвĕ пама кунта специалистсем енĕпе те, оборудовани тĕлĕшпе те условисем çителĕклĕ. Врач патне кĕриччен йышăнмалли, пĕтĕмĕшле практика врачĕн, сывă ача, физиотерапи, шăл сиплемелли, процедура кабинечĕсем, икĕ вырăнлă кăнтăрлахи стационар пур. Медицина специалисчĕсем 8 ялти 1700 çынна, 283 ачана пăхса тăраççĕ.

Кабинетсенче пулнă май Михаил Васильевич врач патне кĕме электронлă майпа çырăнассине йĕркеленипе, районти тĕп больницăпа çыхăну епле пулнипе интересленчĕ. Пациентсем республика Президентне хăйсем çемье практикин врачĕн уйрăмĕн ĕçĕ-хĕлĕпе питĕ кăмăллă пулни пирки хыпарларĕç.

Юлашки вăхăтра Президент çынсен сывлăхĕн ыйтăвĕ çине пысăк тимлĕх уйăрни вăрттăнлăх мар. Çавна май вăл çитсе курнă тепĕр учреждени те сывлăх сыхлавĕн ĕçĕ-хĕлĕпех çыхăннă. Ку вăл Мăн Сĕнтĕрти «Муркашри 2-мĕш номерлĕ район больници» муниципаллă сывату учрежденийĕн поликлиники пулчĕ. 2-мĕш номерлĕ район больницин тĕп врачĕ Леонид Самушков каласа панă тăрăх кунта 17 врач, 49 медицина сестри вăй хурать. Вĕсем территорири 10 пин çыннăн сывлăхĕшĕн ответлă пулса тăраççĕ. Поликлиникăра куллен 150 çынна йышăнма пултараççĕ, талăкĕпех сипленмелли стационарта 40 вырăн.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

**Сăн ӳкерчĕкре: «Оринино» хуçалăхăн машинăпа трактор паркĕнчи ĕçлĕ калаçу – çурхи уй-хир ĕçĕсем пирки.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

## «Пирĕн чун ыратăвне туйсан тем пекехчĕ»

Информаци кунĕ

***Апрелĕн 20-мĕшĕнче районта черетлĕ пĕрлехи информаци кунĕ иртрĕ. Чăваш Республикин хăй тĕллĕн çӳрекен тата ытти тĕрлĕ тĕслĕ машинăсене тĕрĕслесе тăракан патшалăх инспекцийĕн пуçлăхĕ В.П. Димитриев ертсе пыракан ĕç ушкăнĕ Турай ял тăрăхне çитсе унти ĕç-хĕлпе паллашрĕ, паянхи çивĕч ыйтусем тавра калаçуирттерчĕ. Ял çыннисемпе сӳтсе явмалли чăн та сахал мар: Чăваш Республикинче сывлăха сыхлассине модернизацилессин 2011 – 2012 çулсенчи программи çинчен, Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче нумай ачаллă çемьесене çĕр участокĕсем уйăрса парасси çинчен» Саккунне вăя кĕртес пирки, ялсене тирпей-илем кĕртес тата ытти ыйтусем те.***

Турай ял тăрăхĕ 11 яла пĕрлештерет, 903 хуçалăхра 2272 çын пурăнать. Чи малтанах ял тăрăхĕн администрацийĕнче культура тата ытти ĕçченсемпе тĕл пулу пулчĕ. Пухăннисем хăйсене кулленех хумхантаракан ыйтусене тапратмасăр хăвармарĕç. Вĕсене Етĕрне районĕ еннелле тăсăлакан республика пĕлтерĕшлĕ асфальт çул тăвасси, хăш-пĕр ялсенчи çулсене йĕркене кĕртесси, урамсене шывпа тивĕçтересси канăçсăрлантарать. Çаксенчен те çивĕчрехххи тата пăшăрхантараканни вара – Турайри сиплев учрежденийĕн малашнехи шăпи. Хăй вăхăтĕнче кунта пĕр харăсах 35 – 40 çын сипленме пултарнă, тĕрлĕ сăлтавсене пула çулсерен ку хисеп чакнă. Халĕ вара кунта пĕтĕмпе 9 койка вырăн: 5-шĕ талăкĕпех сипленмелли, 4-шĕ кăнтăрлахи. Кунта вăй хуракан медицина ĕçченĕсем çынсен ыйтăвĕсене кура ялсене те тăтăшах тухса çӳреççĕ.

– Çапах та чир-чĕр аптăратма пуçличчен сывлăх пирки чылай маларах шутламалла, профилактика ĕçĕ çине пысăк тимлĕх уйăрмалла. Сывлăх çирĕп пуласси чи малтан çынран хăйĕнчен килет, шел пулин те хăш чухне эрехпе иртĕхекенсем хăйсене пĕр шелсĕр хавшатаççĕ, – терĕ В.В. Толстов врач сывлăх çирĕплĕхĕ медицинăран 15 процент кăна килнине палăртса.

Ватă çынсен пăшăрханăвĕ вара ытларах та палăрчĕ.

– Çӳлти шайри ĕçченсем ял çине ытларах тимлĕх уйăрмалли пирки калаççĕ-ха. Тепĕр тесен сывлăха сыхлас ĕçе модернизацилесси çинчен те калаçаççĕ, апла пулсан Муркаш больници аякра вырнаçнине шута илсе Турай больницине сыхласах хăварасчĕ. Пирĕн чун ыратăвне ответлă ĕçченсем туйсан тем пекехчĕ, – терĕç пĕр шухăшлăн Турай ял тăрăхĕнчи ватă çынсем.

Кунта ытти тăрăхрисем те сипленме килеççĕ. Ятарлă программăпа килĕшӳллĕн унта реконструкци ĕçĕсем пулса иртмелле. (Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

## Путин: «Президент суйлавĕ пирки пăлханма кирлĕ мар»

Суйлав ыйтăвĕсемпе

**Çĕр-шывра суйлав умĕнхи кампанипе Раççее малалла аталантарассипе усă курмалла тесе палăртнă «Единая Россия» лидерĕ, РФ премьер-министрĕ Владимир Путин.**

Апрелĕн 15-мĕшĕнче вăл парти ертӳçисемпе тĕл пулнă, «единороссемпе» Патшалăх Думин суйлав кампанийĕн ыйтăвĕсене сӳтсе явнă.

«Единая Россия» политика кĕрешӳвĕнче ытти обществăлла организацисемпе политика партийĕсем хушшинче конкурентлă пултăр тесен чи малтанах партин хăйĕн ретĕнче конкурентлă лару-тăру туса хумалла»,– палăртнă Путин. Унăн шучĕпе пĕр шухăшлисем хушшинче çĕр-шыв аталанăвĕн проблемисем тĕлĕшпе усă, ирĕклĕ дискусси йĕркелемелле. Депутат пулма кандидатсем суйланă чухне усçăнлăх кирлĕ.

Списока лекмелли çав 600 çыннăн парти шайĕнче çеç палăрни çителĕксĕр. Регионсемпе муниципалитетсен шайĕнче вĕсене пĕтĕм халăх хак пама пултартăр. Мĕншĕн тесен çынсем «Единая Россия» партие шанаççĕ, уншăн сасăлаççĕ, апла пулсан вĕсем çĕр-шыв парламентĕнче хăйсен интересĕсене камсем хӳтĕлесси пирки те пĕлме тивĕç. Общество умĕнчи усçăнлăх пĕтĕмĕшле кăтартусемшĕн, проблемăсене татса парассин системине йĕркелессишĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Аса илтеретпĕр: çак кунсенче Путин хăй те, çĕр-шыв пуçлăхĕ Дмитрий Медведев та 2012 çулхи президент суйлавне хутшăнас марри пирки пĕлтермен.

**ХИСЕПЛĔ МУРКАШ РАЙОН ÇЫННИСЕМ!**

Сире çывхарса килекен Чăваш чĕлхин кунĕ ячĕпе чунчĕререн саламлатăп.

Чăваш чĕлхи – пирĕн тăван чĕлхе, атте-анне парнеленĕ пуянлăх. Тăван чĕлхере – пирĕн тăван ен, пурнăç илемĕ. Унăн çепĕçлĕхĕнче, янăравлăхĕнче – чăваш халăх культурин хăйне евĕрлĕхĕ. Пирĕн ачалăх, пирĕн пурнăç, пирĕн малашлăх – пĕтĕмпех тăван чăваш чĕлхипе çыхăннă. Тымарĕ çирĕп йывăç çеç лайăх ӳсет. Пирĕн те тăван ен историйĕпе культури, чăваш халăхĕн ырă йăли-йĕрки çине таянса воспитани памалла çитĕнекен ăрăва. Çавăн чухне çеç малашлăх усăмлă пулĕ.

Чăваш чĕлхи кунне эпир чăвашсене çутта кăларакан И.Я. Яковлев çуралнă кун паллă тăватпăр. Вăл пирĕн ентешĕмĕр – Муркаш районĕнче çуралса ӳснĕ чăвашсен пĕрремĕш писателĕсенчен пĕри, çавăн пекех историкĕ, этнографĕ, фольклорисчĕ С.М. Михайлов-Яндуш пуçланă ĕçе вĕçне çитерет. Спиридон Михайловичăн ĕçĕсем чăваш художество литературин никĕсĕ пулнă пулсан Иван Яковлевич чăваш çырулăхне йĕркелет, чăваш чĕлхи ытти чĕлхесемпе тан пултăр тесе чунне парса ĕçлет. Тепĕр паллă ентешĕмĕр – Муркаш Ен ывăлĕ, чăвашсен пĕрремĕш историкĕсенчен, этнографĕсенчен, чĕлхеçисенчен пĕри Н.В. Никольский вара И.Я. Яковлевăн ĕмĕтне пурнăçа кĕртет: «Хыпар» хаçата йĕркелет. Çак маттур чăваш ывăлĕсем тăрăшни ахаль пулмарĕ. Паян тăван чĕлхемĕр çепĕççĕн, ирĕклĕн янăрать. Вăл çĕр-шывăмăрта вырăс чĕлхипе пĕрле патшалăх чĕлхи пулса тăчĕ. Çакăнта Муркаш çĕрĕн маттур ывăлĕсен тӳпи пурришĕн эпир савăнатпăр, вĕсемпе мăнаçланатпăр. Вĕсен ĕçне малалла тăсасси – пирĕн тивĕç.

Сире малашне те ытарайми çепĕç, янăравлă тăван чĕлхемĕре, хамăр халăхăмăрăн ĕмĕртен пыракан историне, культурине, йăли-йĕркине сыхласа хăварас, аталантарас ĕçре çитĕнӳсем тума ырлăх-сывлăх, телей сунатăп. Пирĕн малашне те Иван Яковлевич каласа хăварнă пек ырă ĕçсем ытларах тума тăрăшмалла, пĕр-пĕрне пулăшмалла, малаллах туртăнмалла. Яланах пĕрле пĕр тĕллевпе пурăнмалла, ĕçлемелле. Кун пек чухне йывăрлăхсене çĕнтерме те, умри тĕллевсене пурнăçлама та çăмăлтарах. Район та аталану çулĕпе малаллах кайĕ.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

Çур аки – 2011

## Хире тухма хатĕрленеççĕ

Вăхăтра пурнăçланă ĕç кăна çур акире йĕркеллĕ ĕлкĕрсе пыма май парать. Çакна ăнланакан ял çынни паян яра кунах техника юсать, минераллă удобренисем хатĕрлет, сĕрмелли-çунтармалли материалсем янтăлать.

Районти ял хуçалăх пайне тăратнă оперативлă кăтартусемпе ака уйăхĕн 15-мĕшĕ тĕлне хуçалăхсенче хирте ĕçлемелли тракторсен 84 проценчĕ, сеялкăсен 81 проценчĕ, култиваторсен 84 проценчĕ юсавлă.

Хуçалăхсем çур аки валли пĕтĕмпе 245,9 тонна (54,2 процент) дизель топливи, 70,6 тонна (54,3 процент) бензин хатĕрленĕ. Ку енпе ĕçсем самантлăха та чарăнмаççĕ. Çакă хресчен çур аки пĕлтерĕшне тивĕçлĕ хак пани пирки калать.

**А. БЕЛОВ.**

Хушу

## Майăн 7–8-мĕшĕсенче – тӳлевсĕрех

Çак кунсенче район администрацийĕн пуçлăхĕ ятарлă йышăну кăларнă. Вăл Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 66 çул çитнине уявланă тапхăрта – майăн 7–8-мĕшĕсенче – йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен предприятисен ĕçне йĕркелессипе çыхăннă. Çĕнтерӳ кунне уявланă май туса ирттерме пăхнă мероприятисен планĕпе килĕшӳллĕн кирек епле харпăрлăх йĕркипе ĕçлекен йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен предприятисене те 2011 çулхи майăн 7–8-мĕшĕсенче Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсемпе инваличĕсенне тата тыл ĕçченĕсенне çӳç касассине тӳлевсĕр йĕркелеме, мунчара тӳлевсĕр çăвăнтарма майсем туса пама сĕннĕ. **Хамăр инф.**

Саламлатпăр!



Муркаш ялĕнче пурăнакан **Лидия Гурьевна ИВАНОВĂНА** çуралнă кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм кун-çул сунатпăр. Мĕн шухăшланисем пĕтĕмпех пурнăçланччăр.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, икĕ хĕрĕ, аппăшĕсем, çывăх тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, аннене, хунямана, асаннене, кукамая – Кораккасси ялĕнче пурăнакан **Калиса Ефимовна СИДОРОВĂНА** 85 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул сунатпăр. Турă вăй-хăват патăр, кăмăлу яланах çĕкленӳллĕ пултăр. Сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, ачусемпе, мăнукусемпе, кĕçĕн мăнукусемпе савăнса пурăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: 16 мăнукĕ, 8 кĕçĕн мăнукĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, çывăх тăванĕсем, Серовсен çемйи.**

# Кил тата хушма хуçалăх



## «Пурăнаканăн пур ĕçе те пĕлмелле»

**Хресченлĕхе чунĕпе парăннă хĕрарăм**



Ĕç çынна илем кӳрет. Çак чăнлăха Катькас ял тăрăхне кĕрекен Кораккасинчи 85 çулхи кинемей патĕнче пулсан тепĕр хут ума кăлартăм. Калиса Ефимовна Сидорова ĕç ĕмĕрĕнче тата ял пурнăçĕнче тарăн та ырă йĕр хăварнă. Манпа калаçнă май унăн куçĕнчен куççуль шăпăртатса тухни те умра пурнăç йывăрлăхне самаях курма тивнĕ хĕрарăм ларнине çирĕплетрĕ.

Пĕччен хулă хуçăлать теççĕ, анчах ку сăмахсем Калиса Ефимовна пирки мар. Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçинче ашшĕне çухатнă хĕр пĕр ялти фронтовикпах 1949 çулта çемье çавăрсан та çемье пурнăçĕ вĕсен нумая тăсăлман. 23 çултан 5 ача ашшĕ Георгий Сидорович вăхăтсăр пурнăçран уйрăлать.

– Ялта-и, хулара-и, çапах 5 ачана пурнăç çулĕ çине пĕччен кăларма çăмăл марах. Атте фронтра пуç хучĕ, мăшăрăм фашизма тĕп туса таврăнчĕ. Çăмăл пулман вĕсене. Çакна шута илсе эпĕ те чĕрене хытартăм, йывăрлăх умĕнче ĕсĕклесе лармарăм. Ачасене пурнăç çулĕ çине кăларассинче килти хушма хуçалăха аталантарнине мала лартрăм. Çапла вара паян та килти хушма хуçалăхра кăштăртаттармасăр, çамрăксем усракан выльăх-чĕрлĕхпе тата кайăк-кĕшĕкпе киленмесĕр кун иртмест, – терĕ Калиса кинемей. Çапла калаçса 85 çул тултарнăскер чӳречерен кил картинче тăракан ĕнине пăхса илчĕ. Ĕнепе пĕрле хурсем те хĕвел ăшшинче шыв кӳлленчĕкĕнче чӳхеннине курсан кинемейĕн çилпе кушăрханă тути кулса илчĕ.

– Паянхипе иртнине танлаштарайăмăн ĕнтĕ. Кил хуçалăхра эпĕ пăхнă тĕрăх йăлтах тĕреклĕ çуртсем, – тесе калаçăва малалла шутаратăп.

– Килти хушма хуçалăха паян кĕçĕн ывăлăм çемйипе тытса пырать. 2 хĕрпе 3 ывăла пĕчченех ура çине тăратрăм. Вĕсем паян ĕçрен пăрăнса çӳременнишĕн хĕпĕртетĕп. Кашнин хăйĕн килти хушма хуçалăхĕ. Мăнуксем те ĕçе юратса ӳсеççĕ. Çапла вăл килти хушма хуçалăх. Ăруран ăрăва ĕç юратăвне куçарать, – шурă çӳç пĕрчисене тутăр айне тирпейлесе чикнĕ май калаçрĕ ĕç ветеранĕ.

– Сирĕн пурнăç çулĕ вăрăм пулнăран хăй вăхăтĕнче хресченсене колхоза «хăваласа» кĕртни пирки те астăватăр пулĕ?

– Вăл вăхăтра эпĕ 10 çултан иртнĕччĕ ĕнтĕ. Аттепе анне вăтам хресченсем пулнă. Колхозсем тума вăхăт çитсен вĕсем пуринчен малтан ĕнине тата лашине урапи-çунипех колхоза панăçç. Хуньстариксем 2 хутлă ампар, лашасемпе ĕнесем тытнă пулнă, вĕсенне вара «кулак» ятпа йăлтах туртса илнĕ. Çавăнпа эпĕ те, манăн упăшка та хамăр ĕçпе çеç пурнăç урапине тикĕс илсе пыма пултарнине ачаллах ăнлантăмăр, – терĕ кинемей хамăр калаçу вăрçă çулĕсене çитнине палăртса.

Пурнăçне колхозпа тата килти хушма хуçалăхпа çыхăнтарнă К. Сидорова 4 класс хыççăнах халăхран юлмасăр фермăра пăру пăхнă, утă çулнă, тыра вырнă. Колхозри ĕçпе пĕрлех тăван сад-пахчари ĕçсене те юхăнтарса яман.

– Пĕррехинче ирхине вăранса кайрăм та сĕтел хушшинче анне макăрса ларать. Эпĕ вăраннине курчĕ те куççульне чараймасăр: «Эх, ачамсем, тĕнчене хуйхă çитрĕ вĕт. Вăрçă пуçланнă», – терĕ. Хĕр çулне çитнĕ пулсан та вăрçă мĕнне пĕлменччĕ. Çавăнпа та умри хуйхă пирки те çăмăлраххăн шутланă пулас. Тепрер кунтанах ялти арçынсем фронта кайма пуçларĕç. Ялта макăрнă сасă кăна тăратчĕ. Манăн атте те çурла уйăхĕнче тăшманпа çапăçма тухса кайрĕ. «Ольги, ачасене лайăх пăх. Тĕлĕк усал куртăм. Пирĕн пӳрт кĕтесси ишĕлсе аннă. Вăрçă хирĕнчен тухаймастăп пуль», – терĕ вăл аннене килтен тухса каяс умĕн. Чăнах та унран фронтран çыру та илсе кураймарăмăр. Уйăх çурăран вăл вилни пирки хыпар килчĕ, – куççульне шăлса илчĕ чӳрече умне вырнаçнă кинемей.

– Кил-тĕрĕш пирки анне самантлăха та манмастчĕ. Колхоз ĕçĕнчен таврăнсан каçпа килте çăм арлатчĕ, кăçатă йăвалатчĕ. Вăхăт тупса пыл хурчĕсемпе ĕçлетчĕ, – калаçăва хутшăнчĕ тăван ялтах пурăнакан Евстолия хĕрĕ.

«Пурăнакан çынăн пур ĕçе те тума пĕлмелле, пĕлменнине вĕренме тăрăшмалла», – терĕ К. Сидорова ĕç пурнăç тыткăчи пулнине çирĕплетсе.

**А. БЕЛОВ.**

## Улмуççисем пулăшу кĕтеççĕ

**Хĕл хыççăн**

Çимĕç тăвакан йывăççисен тураттисене касассине вĕçлеймен пулсан сĕткен куçма пуçличчен пахчаçăн çак ĕçе вĕçлемелле. Ку тĕлĕшпе хуçăлнă, хăрнă, йывăç тăрринче шалалла ӳссе кĕрекен туратсене касса тирпейлемелле. Пан улми тăвакан улмуççи тураттисем çине хĕвел çути лайăх ӳктĕр тесе ĕçлемелле.

Çулсем иртнĕ май улмуççисем те ватăлаççĕ, вăйсăрланаççĕ. Пан улми тухăçĕ чакать, вĕсем вĕтелеççĕ. Çавăнпа та улмуççисене «çамрăклатассипе» те çуркунне ĕçлемелле. Ку тĕлĕшпе тĕп туратсене çуррине майлă касса илмелле. Каснă вырăна сад маçĕпе сĕрмелле. Çапла туни улмуççие нимĕн чухлĕ те сиен кӳмест. Çак çулах ун çинче çамрăк туратсем вăй илсе ӳсме пуçлаççĕ.

Туратсене каснă чух асăрханулла пулмалла. Хăшĕсем çак ĕçе пурнăçланă чух йывăç вуллине ылтăшин касса сиенлеççĕ е тĕмеске хăвараççĕ. Çакăн пек вырăнсенче çулсем иртнĕ май хăвăл пулса юлать. Кун пек хăвăлсен халĕ те улмуççи çинче пур пулсан хăвăла çĕрĕкрен тата тĕрлĕ çӳп-çапран тасатмалла та çак вырăна 1-3 процентлă ешĕл сенкер (медный купорос) шыв растворĕпе (10 литр шыв пуçне 100-300 грамм) дезинфекцилемелле. Хăвăл пысăк пулсан ăна вак чул тултарса хăйăрлă цемент растворĕпе хытарса лартмалла.

Сăнанă тăрăх ытларах чухне çамрăк улмуççисен вуллисене хĕл каçа шăшисем кăшласа сиенлеççĕ. Çакна асăрхарăр пулсан кăшт кăна сиенленĕ вырăнсене сад маçĕпе сĕрмелле. Енчен те сăтăрçăсем вулă таврах кăшласа çаврăннă пулсан улмуççие «кĕпер» меслетпе сыпса çĕлса хăварма май пур. Çакна валли сывă та тĕрĕс-тĕкел хĕл касна, сивве чăтăмлă пĕр çулхи улмуççи çинчен илнĕ сапанпа усă курмалла.

Ку меслетпе сыпса хăварас ĕçе сиенленнĕ улмуççи папак çурсанах пурнăçламалла. Сыпма хатĕрленĕ сапанăн сиенленнĕ вырăн тăршшĕнчен вăрăмрах пулмалла. Сапан улмуççи хуппипе тачă пĕрлештĕр тесен унăн вĕçĕсене вулă еннелле чалăш туса касмалла. Вулă çинче шăши кăшласа сиен тунă вырăнтан çӳлте те, аял енче те «Т» сас палли евĕр касса сапан лартма вырăн хатĕрлемелле. Сапан вĕçĕсене унта асăрханса вырнаçтармалла. Вĕçĕсене вулă çумне 2-2,5 мм тăршшĕ пăтасемпе çапса лартмалла. Çиелтен полиэтилен хутпа чĕркемелле, суранлă вырăнсене сад маçĕпе тĕплĕн сĕрмелле. «Кĕпер» меслетпе сыпнă сапанăн улмуççи вулли çумĕнче пĕкĕ пек пулмалла. Çак меслетпе сыпнă сапансен шучĕ улмуççи миçе çулта пулнинчен те, сиенленнĕ лаптăксенчен те килет. Çамрăк улмуççи вулли çинче вĕсем иккĕрен кая пулмалла мар.

«Кĕпер» меслетпе сыпнă сапансем çинче вăхăт иртсен çулçăсемпе туратсем ӳссе тухаççĕ. Вĕсем сапансене вулăпа сыпăнма чăрмав пулаççĕ. Çавăнпа та вăл туратсемпе çулçăсене тăтăшах иртме манмалла мар. Хĕвеллĕ çанталăкра улмуççие шăварассине тата сыпнă вырăнсене хĕвел пайăркисенчен картласшине йĕркелемелле.

Садри çурхи тепĕр ĕç вăл – улма-çырла йывăççисен вуллисене шуратасси. Вăтă улмуççисемпе вĕсен тĕп турачĕсене известь шывĕпе шуратма сĕнетĕп. Ăна хатĕрлеме 10 литр шыв çине 2 кг известь тата 400 грамм ешĕл сенкер кирлĕ. Çамрăк улмуççисене шуратма вара пурă шывĕпе те усă курма юрать.

Юр ирĕлнĕ май улмуççисем сывăхĕнче шыв кӳлленчĕкĕсем пулма пултараççĕ. Сăртлă вырăнта вĕсем кунти тăпрана юхтарса каясран асăрханмалла.

Юр ирĕлсе пĕтнĕ самант вăрман улмуççийĕпе груша сыпмалли чи лайăх вăхăт. Кăна валли пĕр çулхи ӳсĕмри сапанпа усă курмалла. Сапан çинче 4 папкаран кая мар пулмалла.

Улмуççи кĕр çитсен пан улмипе савăнтартăр тесен ăна çуркунне минераллă тата органиклă удобренисемпе апатлантарасси пирки те манмалла мар. Тăпра типнĕ май ăна улмуççисем тавра кĕреçепе пусса кăпкалатмалла.

Сиенлĕ хурт-кăпшанкăсемпе тата чир-чĕрсемпе кĕрешме те специалистсемпе калаçса пăхни ытлашши пулмĕ.

**Ырă сунса**
**А. ШАРИКОВ пахчаçă.**
Тереç ялĕ.

**Апрелĕн 24-мĕшĕ – Мăн кун**

**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!**

Сире пурне те Мăн кун ячĕпе саламлатăп.

Мăн кун пĕтĕм тĕнчери христиансемшĕн мĕн пур уявсен уявĕ, савăнăçсен савăнăçĕ пулса тăрать. Вăл ырăпа тĕрĕслĕх усала, пурнăç вилĕме çĕнтернине пĕлтерет («Христос вилĕмĕнчен чĕрĕлнĕ, вилĕмĕпе вилĕме çĕнтерсе, вилнисене чĕрĕлĕх панă» (Мăн кун кĕллин тропарĕ). Турăн эпир пурте пĕлекен халалĕсем пире тĕрĕс çулпа утма, сывăх çынсене пулăшма, пĕр-пĕрнипе ырă кăмăллă пулма вĕрентеççĕ.

Çынна ырă туни каялла та ырăпах таврăнать, тенĕ ваттисем. Турăшăн эпир пурте тăвансем пулнине асра тытса пурăнмалла пирĕн. Пĕр-пĕрне кӳрентересрен, усал ĕçсем тăвасран сыхланмалла, май килнĕ таран пĕр-пĕрне пулăшма тăрăшмалла. Чун-чĕрепе пуянрах та илемлĕрех, тасарах пулнине мĕн çиттĕр? Кун пек чухне çемьесенче те килĕшӳпе юрату хуçаланĕ, ачасем те телейлĕрех туйĕç хăйсене, преступленисен йышĕ те палăрмаллах чакĕ. Пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесен, пурăнсан, пĕр-пĕрне пулăшсан кăна ĕç ăнать. Район аталану çулĕпе кайтăр тесе малалла та пĕрле тулли кăмăлпа тăрăшса ĕçлер.

Пурсăра та çирĕп сывлăх, телейлĕ вăрăм кун-çул сунатăп. Турă сире, сирĕн çемйĕрсене инкек-синкекрен сыхлатăр, йывăр самантсенче çăмăллăх кӳтĕр. Хăвăрăнне те, ачăрсен пурнăç çулне те уççах пытăр. Вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă Христосăн ырăлăхĕ яланах сирĕнпе пултăр.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ**
**Ю.А. ИВАНОВ.**

**Православи уявĕсем**

## Ыран – Мăн кун

Ыран православипе католиксен чĕркĕвĕсем Мăн кун уявне паллă тăваççĕ. Мăн кун – Христос тĕнне ĕненекенсен чи пысăк уявĕ. Пĕтĕм халăх, çут çанталăк савăнать. Христос чĕрĕлнĕ çак Аслă кун хĕвел те ташласа тухать теççĕ.

Мăн кун уявĕ пĕр эрнене пырать. Уявăн юлашки кунĕ тепĕр вырсарни кун пулать. Ăна кĕçĕн Мăн кун теççĕ. Малтанхи вырсарни кунхи Мăн кун – Аслă Мăн кун. Уява кĕтсе пурте кил-çурта тирпейлеççĕ, таса тум тăхăнаççĕ, тутлă апат-çимĕç пĕçереççĕ, сухан хуппипе çăмарта хĕретеççĕ, килен-каяна хăналаççĕ. Çынсем тăванĕсем, пĕлĕшĕсем патне хăнана çӳреççĕ, савăнаççĕ, парнесем параççĕ. Пĕр-пĕрне тĕл пулсан виçĕ хутчен: «Христос чĕрĕлнĕ» «Чăн чĕрĕлнĕ» тесе саламлаççĕ, виçĕ хут чуп тăваççĕ. Мăн кун çăмарти тыттараççĕ. Аслă праçникре пĕçермелли йăлана кĕнĕ апат-çимĕç хушшинче куличпа пасха (тăпăрчăран) тата мăн кун çăмарти сумлă вырăнта.

**Тĕпел**

## «Мăн кун чечекĕ»

**Чуста валли** 1 стакан сĕт, 2 çăмарта, 50 мл тип çу, 50 г услам çу, стаканăн 3/4 пайĕ чухлĕ сахăр, пĕр чĕптĕм тăвар, 4-5 стакан çăнăх тата 40 г çĕпре кирлĕ.

**Ăшне хатĕрлеме** 50-70 г изюм, 30 г цукат, стаканăн 1/4 пайĕ чухлĕ сахăр, 1 чей кашăкĕ ваниль сахăрĕ, 2 апат кашăкĕ услам çу, килĕштернипе – 1 чей кашăкĕ корица.

**Апельсин глазурьне** тума 2 апат кашăкĕ сахăр пудрипе 1-2 чей кашăкĕ апельсин сĕткенне тĕплĕн пăтратмалла.

Хăпарса çитнĕ чустана çур сантиметр хулăнăш пысăк икерчĕ пек пуличчен йĕтĕрлемелле. Ăна ирĕлтернĕ услам çупа сĕрмелле. Çиеле çуса типĕтсе илнĕ изюм, цукат, сахăр, ваниль сахăрĕ, килĕштерĕр пулсан корица сапса тухмалла. Хыççăн чустана рулет пек çавăрмалла.

Рулета çу сĕрнĕ противень çине çĕрĕ пек çаврашка туса хумалла. Вĕçĕсене çăмарта шуррипе кăшт сĕрсе илсе пĕрлештермелле, чĕпĕтсе тухмалла. Тĕпел хаччипе е çĕçĕпе рулета тул енчен чечек евĕр туса кăшт касса тухмалла. Рулета хăпарса çитме 20 минутлăх ăшă вырăна лартмалла. Духовкăна лартас умĕн ăна çăмарта саррипе сĕрмелле. 190–220 градус вĕри духовкăра рулет 20–25 минутра пиçет. Рулета кăларнă хыççăн 10–15 минутлăх таса ал шăллипе хупламалла, хыççăн вара ăна апельсин глазурьне сĕрмелле. Кăшт изюм, цукат тата мăйăр сапма пултаратăр.

**Сăмах – выльăх тухтăрне**

## Тирпейлĕ пулар

Ăшă кунсем тăнипе юр ирĕлсе пĕтнĕпе пĕрех. Çавна май юр айĕнчен хĕлле вилнĕ чĕр чунсен юлашкисем тухаççĕ. Мĕн тумалла вĕсемпе?

Биологи каяшне пуçтарассипе тата ăна тĕп тăвассипе РФ патшалăх Тĕп ветинспекторĕ 1995 çулта çирĕплетнĕ правилăсем пур. Вĕсем пур выльăх-чĕрлĕх усракана та пырса тивеççĕ: килти хушма хуçалăхран пуçласа пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем таранах. Çав правилăсемпе килĕшӳллĕн биологи каяшне çĕр чавса пытарма, ăпăр-тапăр пухăнакан контейнерсене тата шыва, шурлăхлă вырăнсене пăрахма, полигонсене илсе кайма юрамасть. Çакăншăн вилнĕ выльăх хуçи явапла пулса тăрать.

Çĕрпӳри ветсанутильзаводра вилнĕ выльăхсене технологипе килĕшӳллĕн тирпейлеççĕ. Иртнĕ çул пирĕн районтан унта пĕр лаша, 137 пуç майраkалла шултра выльăх, 643 сысна, 427 йытă, 4 кушак илсе кайнă. Юр айĕнчен вилĕ чĕр чунсен тухнă май ку ĕçе малалла тăсмалла. Автотранспорт чĕнсе илме 8 (83545) 66-1-81 (Çĕрпӳ) е выльăх чирĕсемпе кĕрешекен Муркашри станцие 62-8-46 номерсемпе шăнкăравламалла.

Территорисене тирпей-илем кĕртме кашни ялтах санитари кунĕсем ирттермелле.

**В. ИЛЬИН, выльăх тухтăрĕ.**

